**Вăранăр, тапранăр!**

*(Вырăс юррисем тăрăх)*

Хура халăха ирĕке янă
Нарăсăн вун тăххăрмĕш кунĕнче,
Анчах çĕр халăха пулаймарĕ, —
Ак сире улпутсен ырлăхĕ.

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтарттăр!
Малалла, малалла, малалла!

Хресченсем çĕрсĕр пит аптăраççĕ,
Улпутсем — уншăн питĕ хавас;
Пĕр çĕрсĕр хресченсене тытаççĕ
Йӳн хака хăй ĕçне ĕçлеме.

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтăртăр!
Малала, мапалпа, малалла!

*Иванов, К. Вăранăр, тапранăр! : (Вырăс юррисем тăрăх) // Иванов, К. В. Çырнисен пуххи / К. В. Иванов ; Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 2000. – С. 237.*